# Чувашский

1 Чăн малтанах Сăмах пулнă, Сăмах Турăра пулнă, Сăмах Хăй Турă пулнă. 2 Çав Сăмах чăн
малтанах Турăра пулнă. 3 Мĕн пурри пĕтĕмпех Сăмах урлă пулнă. Мĕн пултаранни нимĕн те
Унсăр пулса кайман. 4 Унра чĕрĕлĕх пулнă, çав чĕрĕлĕх этемсемшĕн çутă пулнă. 5 Çутă
тĕттĕмре çутатать, тĕттĕм ăна хуплаймасть.

6 Çĕр çинче Турă янă çын пулнă, вăл Иоанн ятлă пулнă. 7 Хăй урлă Çутта пурте ĕненччĕр
тесе вăл Çутă çинчен каласа пĕлтерме килнĕ. 8 Вăл хăй çутă пулман, ăна Çутă çинчен
çирĕплетсе пĕлтермешкĕн янă. 9 Çав Çутă – чăн-чăн: Вăл тĕнчене килекен кашни çыннах
çутатать. 10 Вăл Хăй пултарнă тĕнчерех пулнă, анчах тĕнче Ăна пĕлеймен. 11 Вăл
хăйĕннисем патне килнĕ, хăйĕннисем те Ăна йышăнман. 12 Хăйне йышăнакансене, Хăйне
ĕненекенсене Вăл Турă ачисем пулма ирĕк панă. 13 Вĕсем юнпа-ÿтпе те мар, арçын кăмăлĕпе
те мар, çÿлтен, Турăран çуралаççĕ.

14 Çапла Сăмах ÿтленсе, этем пулса, пирĕн хушшăмăрта пурăнчĕ. Атте Турă тулли тивлетлĕ,
чăнлăхлă пĕртен-пĕр Ывăлне мухтава кăларчĕ. Эпир Унăн мухтавне куртăмăр. 15 «Ман
хыçран Килекенни манран мала тухрĕ, Вăл манчченех пулнă тесе каланăччĕ эпĕ. Ку ĕнтĕ
шăпах Çавă», – хыттăн каласа çирĕплетнĕ Ун çинчен Иоанн. 16 Унăн туллилĕхне пула эпир
ырăлăх çине ырăлăх илтĕмĕр. 17 Мĕншĕн тесен саккуна Моисей урлă панă, ырăлăхпа чăнлăх
вара Иисус Христос урлă килнĕ.